Вырма – 2008

Кĕр кунĕсемпе туллин усă курасчĕ

Çак ĕмĕтпе куллен ĕçе тухать паян çĕр ĕçченĕ. Унăн çак вăхăтри тĕп тивĕçĕ – вăхăтра акнă-лартнă, хыççăн куç шăрçине сыхланă пек пăхса ўстернĕ, паян хирте сумлăн чўхенсе ларакан тырă-пулăна çухатусемсĕр пуçтарса кĕлете кĕртсе хурасси. Ытти çĕрти пекех çак тĕллеве тĕпе хурса ĕçлеççĕ паян «ВТМ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра.

Эпир хире çитнĕ чух общество ертўçи П. Макаров та, вырма паттăрĕсем те тулă пуссинчеччĕ. Акă черетлĕ çаврăм тунă хыççăн тулнă бункера Петр Геннадьевич Иванов комбайнерпа унăн пулăшаканĕ Михаил Александрович Соловьев **(иккĕмĕш сăн ўкерчĕкре)** Владимир Семенов ĕçлекен ГАЗ-53 автомашина кузовне пушатрĕç. Тырă турттарнă çĕрте Владимир Александровича витаминлă курăк çăнăхĕ валли ешĕл масса турттарса тăракан ывăлĕ Александр та **(ашшĕпе ывăлĕ пĕрремĕш сăн ўкерчĕкре)** тĕп ĕçрен пушаннă вăхăтра тырă турттарма пулăшать. Пĕрлехи тăрăшулăхпа вара вырма ĕçĕсем те кал-кал ăнса пыраççĕ.

– Çур акире тăрăшнине, çу кунĕсенче тимленине кĕркунне хамăр наянлăхăмăрпа сая ярас мар тетпĕр. Çакна хирте ĕçлекен те, йĕтем çинче тăрăшакан та лайăх ăнланать, – терĕ хирте ĕçлекенсемпе калаçнă хушăра общество ертўçи П. Макаров.



Çак кун вырăна тухнă информаци ушкăнĕ енчен тĕл пулура ял çыннисен ыйтăвĕсене район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – культурăпа архив ĕçĕсен пайĕн ертўçи А. Андреева, район администрацийĕн социаллă хўтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н. Петрова хуравларĕç. Анланторуллă калаçура ыйтусен хуравĕсем пуринче те çиеле тухрĕç.

Çав вăхăтра йĕтем çине çĕнĕ тырă килчĕ те килчĕ **(виççĕмĕш сăн ўкерчĕкре)**.

Анатолий БЕЛОВ.
Автор сăн ўкерчĕкĕсем.

Вулакан сăмах илет

Малалли утăм юхăну çулĕпе мар

Пурнăçри хăвăрт пулса иртекен улшăнусем никама та пĕр вырăнта тăратмаççĕ, тăратаймаççĕ те. Тăтăш шыраври çын кăна ыранхи куна шанчăклăн пăхайрать. «Лайăх та лайăх», –тетпĕр те, анчах ыранхи куна пăхакан хресчен валли ўкме минтер сарса пани курăнмасть: çĕр ĕçченĕн хăй ĕçлемесĕр алла çăкăр кĕмест. Хĕвел çутипе ыйхăран вăранать те вăл ачи-пăчин пуласлăхĕшĕн, çемье малашлăхĕшĕн, ял хуçалăх аталанăвĕшĕн уйăх çути тухичченех çĕр-аннемĕр çинче ĕçлесе тырăпулă çитĕнтерет, выльăхчĕрлĕх ĕрчетет. Анчах унăн яра куна ĕçленĕ ĕçĕ виçĕ пуса çеç ларнине курсан кирек-камăн та чун ыратмалла пек...

Хăш хаçата ан ил, пур çĕрте те ял хуçалăхĕ юхăнса пыни пирки çыраççĕ. Ку вăл юлашки кунсенчи çивĕч ыйту çеç мар, ун çинчен темиçе çул çыраççĕ ĕнтĕ, анчах ял хуçалăх ыйтăвĕ çине никам та тивĕçлипе çаврăнса пăхманни питех те тĕлĕнтерет. Çĕр-шывра тĕрлĕ шайра ĕçлекен миллион пуçлăх тата вĕсем япăх мар ĕç укçи илеççĕ, хăйсен пурнăç ыйтăвĕсем валли пурте пур пулин те, вĕсемшĕн ялти пенсионерăн, пуç çĕклемесĕр хирте те фермăра вăй хуракансен пурнăç шайĕ кăсăклах мар пулас. Мĕншĕн эпĕ çапла калатăпха? Мĕншĕн тесен çакна эпĕ хамăн куçăмсемпе кашни утăмрах куратăп. Нумай пулмасть район хаçачĕн журналисчĕ Анатолий Белов сĕт ыйтăвне çĕклерĕ. Питĕ çивĕч ыйту, анчах ун çине ял çыннисене юрăхлă хурав хăçан пулĕ-ши? Акă тата тепĕр ыйту. Юлашки çулсенче тăтăшах ялта выльăхсен йышĕ чакса пырать. Сăлтавĕ – вĕсене тытма тухăçлă мар. Акă юлашки çулсенче Ураллтан отпуска Муркаша килсен ĕне касăвне пăхма çўретĕп. Виçĕ çул каялла касура 70 пуç ĕнеччĕ, пĕлтĕр 55 пуçа юлчĕ, кăçал 48 пуç ĕне кăна. Укăлчара сурăхсем çўренине курми пултăмăр, ял çыннисем сысна усранă тĕслĕхсем те унта-кунта кăна юлчĕç. Мĕншĕн ял хаçлăхĕ выльăхран писсе пырать? Килти хушма хуçалăхран 5 тенкĕпе сутнă сĕте магазинра 30 тенкĕпе туяннни илсе çитермерĕ-ши çакăнта? Хресчене çак çул çинче 5-6 хут улталани пирки кам шутласа пăхнă-ши? Республикăра Федераци шайĕнчи пысăк пуçлăхсем пулса кураççĕ, анчах ларутăру хресчен майлă çаврăнмасть.

Паян çĕр туянас-сутас ĕç вăй илсе пырать. Уйăхне 500-1000 тенкĕ ĕçлесе илекен çĕр ĕçченĕ туянайĕ-ши ăна? Ĕçлекенĕ вăл-çке! Ку ыйтупа тĕрлĕ партисем хăйсен платформисемпе халăх патне тухаççĕ. Анчах вĕсем хресчене юрăхлă çул шыраса тупни курăнмасть-ха. Ку ыйтăва вăраха яни те çум айне пулнă çĕрсене, «уçман çеремсене» пусă çаврăнăшне кĕртме пулăшаймасть.

Мĕн шутлаççĕ кун пирки VIP-персонăсемпе хаçат вулакансем?

В. МАСТЕРОВ.
Муркаш сали.

Вырма паттăрĕсемпе юнашар

Ĕçлекенсене чыс тăваççĕ

«Кун пек тухăç савăнтарать, ĕçлес вăй-хала хушать», – шăппăн калаçса утать çĕр ĕçĕнче пиçĕхнĕ ватă ял урамĕпе. Хăйĕн вăйĕ паян тĕп вырăнта пулманнине ăнланать асатте, анчах çăкăр туса илес фронтра пухнă ăс-хакăлпа паллаштарма та тăхтаса тăмасть вăл. Çапла, вырма паян ялта пурăнакансене тата çĕр ĕçĕпе çыхăнса тăракансене пурне те пĕр чăмăра пĕрлештерчĕ.

...Çурла уйăхĕнчи çу ăшшине çухатман хĕвеллĕ уяр кун. Вырма ĕçĕсене кўлĕннĕ пĕрлешўллĕ хуçалăх уйĕсенче катара-катара «хир карапĕсем» пĕрин хыççăн тепри малалла шăваççĕ. Вĕсем те юлашки гектарсем çине тухса пыраççĕ ĕнтĕ. Малашлăхпа пурăнакан хресчен вара кĕçех вырма ĕçĕсене вĕçлесе кĕр акине тухĕ, «иккĕмĕш çăкăр» пуссисенчи ĕçе кўлĕнĕ.

Вырма ĕçĕсем кал-кал пынă вăхăтра Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн уйсенчи кĕркуннен илемĕнче ял артистчĕсен савăк сасси инçетренех хăлхана кĕчĕ. Ку вăл Анаткасси ял йĕтемĕ çинче Турай ял тăрăхĕнче йĕркеленнĕ агитбригада вырма ĕçченĕсене ташă-юрăпа савăнтарать. Токшикри «Тăванлăх» фольклор ушкăнĕн ертўçи Н. Кондукторова тата Анаткассинчи Культура çурчĕн художество руководителĕ К. Албутова хут купăсçăсем пулăшнипе тата агитбригадăн пĕтĕмĕшле ĕçне ертсе пыракан Г. Андреева (вăл 1993 çултанпа Анаткассинчи ял библиотекин библиотекарĕ) тăрăшнипе агитбригада çурла уйăхĕн 13-мĕшĕнче вырмаçăсем патне кăçал пĕрремĕш концертпа тухрĕ.

Турай ял тăрăхĕнчи кашни Культура çурчĕпе ял клубĕн ĕçченĕсем пур унта: Токшик, Çуткўл, Анаткас, Турай, Тушкасси – пурĕ 9 çын.

Агитбригада ĕçченĕсем ку тăрăхра çулленех – вырма паллисем.

– Вырма çеç тесен çителĕксĕр пулать. Эпир çур акире хамăр ĕçе кўлĕнетпĕр те хура кĕрчченех ял-йышпа пĕрле, – терĕ кĕске калаçура агитбригада ертўçи Галина Павловна Андреева библиотекарь.

Юрă, ташă тата ăста шўт тухăçлă ĕçĕн çывăх юлташĕ. Çакна никам та хирĕçлеймĕ.

А. ПЕТРОВ.

Республика кунне уявласа тата ЧР Президенчĕн программине пурнăçа кĕртсе

Цифрăллă технологисен ĕмĕрĕ вăй илет

Районăмăр пĕтĕм вăйран, вуншар-çĕршер çын тăрăшулăхĕпе, проедприяти-организацисем мал туртăмлă ĕçленипе Республика кунне чыслăн уявларĕ. Тирпейилем, çĕнĕ технологисен аталанăвĕ, культура çул-йĕрĕ, çĕр ĕçĕпе ял пурнăçĕ – пурне те эпир нумаях пулмасть çĕр-шыв, тĕнче умĕнче чи çўллĕ шайра кăтартрăмăр, хамăр патăмăра инвестицисен çулне уçма хăйне евĕр утăм турăмăр.

Паян кашниех ăнланатпăр, пурнăç утăмĕпе тан пыма информаци ресурсĕсене тăтăш алла илсе пыни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакна ЧР Президенчĕ Н. Федоров та республика аталанăвĕнче мала хурать. Аçта мĕн пулнине вăхăтра пĕлеймерĕн-тĕк, çĕнĕ технологисене çийĕнчех алла илеймерĕн-тĕк, ĕçўне вăхăтра кирлĕ пек кăтартаймарăн-тăк, хăв тунипе çынсене çийĕнчех паллаштараймарăн-тăк оперативлăху чакать, санăн тар юхтарни виçĕ пуса кăна тăрса юлать. Çакна ăнланса Муркаш Ен паян республика шайĕнче ăнăçлă малалла утать.

Чăваш Ене пурнăç аталанăвĕн малти речĕсенче илсе пырас тĕллевпе ЧР Президенчĕ Н. Федоров 2005 çулхи юпа уйăхĕн 3-мĕшĕнче «Чăваш Республикин гражданĕсене информаци ресурсĕсем патне çыхăхарах тăвас тĕллевпе хушма ĕçсем çинчен» Указ кăларчĕ. Çакă республикăра информаци технологийĕсен çĕнĕ ĕмĕрне старт паниех пулса тухрĕ: паян кашни предприяти-организацирех ĕçсене компьютер технологийĕсене никĕслесе туса пыраççĕ, шкулсенче ачасем Интернета тухса пурнăçра обществăри çĕнĕлĕхсемпе паллашса ўсеççĕ-аталанаççĕ, ЧР Президенчĕн «Кашни киле – компьютер» программипе тухăçлă ĕçлесе чылай граждансем килсенче те компьютерпа усă курма пуçларĕç. Çак ĕçри чикĕсĕр малашлăх кашнинех çĕнĕ ĕмĕтсемпе пурăнма хавхалантарать.

ЧР Президенчĕн Н. Федоровăн «Чăваш Республикин гражданĕсене информаци ресурсĕсем патне çыхăхарах тăвас тĕллевпе хушма ĕçсем çинчен» Указĕ çинче никĕсленнĕ «Кашни киле – компьютер» программа республикăмăрта пĕрремĕш кунранпах тĕллевлĕ ĕçлеме пуçларĕ. Çынсем те çак программăпа ĕçлесе çăмăлрах майпа компьютерлă пулма май пуррине ăнланса илчĕç. Муркаш районĕ çак ĕçре те республикăра ыттисемшĕн тĕслĕх пулнине Чăваш Республикин патшалăх çыхăну комитетĕнче çу пуçламăшĕнче иртнĕ канашлу та çирĕплетсе пачĕ. Унта Президент Программипе ăнăçлă ĕçлекен Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисемпе пĕр ретре Улатăр тата Муркаш районĕсен ячĕсем пулни эпир çĕнĕлĕхсемпе тан пыма пултарни пирки калать. «Муркаш районĕнчен тĕслĕх илĕр. Кунта Программа ĕçлеме пуçланăранпа 53 клиент 1 миллион та 433 пин тенкĕлĕх компьютер оборудованине çăмăлатнă кредитпа туянчĕ», – терĕç унта. Кредита РФ Перекет банкĕ парать. Компьютер техникине кредитпа илнĕ çынсен Чăваш Республикин патшалăх çыхăнупа информатизаци комитетне субсиди пирки килĕшў тума та пырса çўремелле мар, ку процедура Перекет банкĕн уйрăмĕсем урлă пулса пырать.

«Кашни киле – компьютер» программăпа тĕллевлĕ кашни киле кредитпа компьютер туяннишĕн республика бюджетĕнчен халăха вуншар миллион тенкĕ субсидилеме пăхнă. Çак ĕç ăнăçлă пурнăçа кĕрсе пырать.

Компьютер пулни тата Интернета тухма çул уçни кашнинех тĕнчепе çыхăхарах пулма май парать, пĕлĕве ўстерет, çыхăну услугисемпе ĕç мелĕсене хăвăртлатать, вĕсен пахалăхне пысăклатать.

«Кашни киле – компьютер» программăпа Чăваш Республикинче пурăнакансене 2010 çулччен килти компьютерсемпе тивĕçтерессине вăтам Европа шайне кăларма пултарасси (çемьесен 30-40 проценчĕ) куç кĕрет. Вырăнти самоуправлени органĕсемпе вĕрентў учрежденийĕсене малларах асăннă указ халăха компьютерпа ĕçлемелли пуçламăш хăнăхусем пама сĕннĕ. Çак çăмăллăхсенех республикăна компьютеризацилессишĕн интересленекен уйрăм çынсен фирмисем урлă та илме пулать.

Юлашки сăмахсем пирĕн районта Николай Васильевич Еропанов ертсе пыракан чикĕллĕ яваплăхлă «ИТ Технологисем» обществăна та пырса тивеççĕ. 5 çул каялла уçăлнă фирма района компьютеризацилессипе пысăк ĕçсем туса ирттерет. «ИТ Технологисем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна хăйĕн ĕçне çўллĕ шайра туса ирттерме Мускаври «Никс» компьютер супермаркечĕн официаллă дилерĕ пулни те тĕкĕ парса пырать. Н. Еропанов унтан тўрремĕнех илсе килекен компьютерсем ытти нумай çĕртинчен йўнĕрех пулни те кунти пулăшупа усă кураканнисемшĕн вырăнлă.

– Илсе килсе кăна мар, Николай Васильевич компьютерсене вырнаçтарса та парать, ĕçлеме те вĕрентет, усăллă сĕнўçем парать, ванса кайнине вăхăтра юсать – ĕçлеме кăмăллă, – терĕ «ИТ Технологисем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăран ĕçлеме майлаштарнă процессора йăтса тухакан арçын.

Н. Еропанова пĕрремĕш кун мар пĕлетĕп. Ана хисеплесе каласа хăварнă сăмаха аталантарса общество ертўçипе калаçу пуçартăм. Чикĕллĕ яваплăхлă общество района компьютеризацилес енĕпе тĕрлĕ ĕçсем пурнăçлать-мĕн.

– Çыннăн пурнăçпа тан пырас тесе компьютер туянмалла çеç мар, унпа ĕçлемелле, ĕç валли программăсене вăхăтра вырнаçтармалла, стройран тухнă техникăна çийĕнчех юсамалла, ĕçлекен техникăна тирпейлĕ пăхмалла, картриджсене тултарса тăмалла т. ыт. те. Кунпа пĕрлех цифрăллă технологисен ĕмĕрĕ малалла аталаннăçемĕн пирĕн пурнăçа спутник телевиденийĕ çитрĕ. Нихăшĕ те ĕçрен ўркенмен çыншăн ытлашши мар. Пирĕн общество вара кашнин тĕлĕшпех çителĕклĕ пулăшу парайрать. Клиентсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтересси – пирĕн тĕп тĕллев. Юлашки вăхăтра «1С» бухгалтерия» программăна ыйтакансем йышланчĕç. Питĕ лайăх программа. Кунта та эпир район халăхне пулăшма яланах хавас, – терĕ юсава илсе пынă черетлĕ компьютера пăхма пуçланă Николай Васильевич Еропанов.

«ИТ Технологисем» чикĕллĕ яваплăхлă общество вара пурнăç улшăнăвĕсемпе çĕнĕлĕхĕсемпе шăпах тан пыма тăрăшать. Районта пурăнакансене те çапла тума пулăшать.

Анатолий БЕЛОВ.